26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
22
ЮНКУН
189(6426) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

Центральнăй фронтăн çарĕсем, малалла хăварт тапанса пырса, ДЕСНА юханшывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та, айккипе кайса пултарулла маневр туса, виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн паян, сентябрĕн 21-мĕшĕнче, Украинăри область центрне — ЧЕРНИГОВ хулине — ДЕСНА юханшывĕн анат вĕçĕнчи нимĕçсен оборонин питех те паха тĕреклетнĕ пунктне штурмласа тытса илнĕ.

Çапла вара, нимĕçсем ДЕСНА юханшывĕн хĕвеланăç çыранĕ тăрăх хатĕрленĕ оборонăна пирĕн çарсем çав юханшыв тăршшĕпе пĕтĕмпех татса тухрĕç, пирĕн çарсен наступленине ДЕСНА юханшывĕ тĕлĕнче чарса лартма нимĕçсем тунă план пĕтĕмпех арканса кайрĕ тесе шутлас пулать.

ДЕСНА юханшывĕ урлă каçнă чухнехи тата ЧЕРНИГОВ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ПУХОВ генерал-лейтенантăн, НЕЧАЕВ генерал-майорăн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн РУДЕНКАН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмăнах çаксем чапа тухнă:
МИЩЕНКО генерал-майорăн 148-мĕш стрелковăй дивизийĕ, САРАЕВ генерал-майорăн Ленин орденлĕ 181-мĕш Сталинградски стрелковăй дивизийĕ, МАХЛИНОВСКИЙ генерал-майорăн 211-мĕш стрелковăй дивизийĕ, АСКАЛЕПОВ генерал-майорăн 77-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, КИРСАНОВ генерал-майорăн 76-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, БЕЛОВ полковникăн 16-мĕш Гвардейски кавалери дивизийĕ, ПЕТРУШИН полковникăн 129-мĕш танковăй бригади, ФЕДОРОВ подполковникăн 874-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ГЛАДКИЙ майорăн 476-мĕш минометнăй полкĕ, ОСТРОГЛАЗОВ подполковникăн 1287-мĕш зенитнăй артиллери полкĕ, КОМАРОВ полковникăн 2-мĕш Гвардейски штурмовой авиаци дивизийĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ДЕСНА юханшывĕ урлă каçнă чухнехи тата ЧЕРНИГОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене — 148-мĕш стрелковăй дивизие, 211-мĕш стрелковăй дивизие, 77-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие, 76-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие, 16-мĕш Гвардейски кавалери дивизине, 129-мĕш танковăй бригадăна, 874-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкне, 476-мĕш минометнăй полка, 1287-мĕш зенитнăй артиллери полкне тата 2-мĕш Гвардейски штурмовой авиаци дивизине „ЧЕРНИГОВСКИ" тесе ят парас.

Малашне вăл соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

148-мĕш Черниговски стрелковăй дивизи,
211-мĕш Черниговски стрелковăй дивизи,
77-мĕш Гвардейски Черниговски стрелковăй дивизи,
76-мĕш Гвардейски Черниговски стрелковăй дивизи,
16-мĕш Гвардейски Черниговски кавалери дивизийĕ,
129-мĕш Черниговски танковăй бригада,
874-мĕш Черниговски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ.
476-мĕш Черниговски минометнăй полк,
1287-мĕш Черниговски зенитнăй артиллери полкĕ,
2-мĕш Гвардейски Черниговски штурмовой авиаци дивизийĕ.

Ленин орденлĕ 181-мĕш Сталинградски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлама тăратас.

ДЕСНА юханшывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн чапа тухнă соединенисемпе чаçсен командирĕсене Суворов орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 21-мĕшĕнче 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ ДЕСНА юханшывĕ урлă ăнăçлăн каçнă, ЧЕРНИГОВ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăвата тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ДЕСНА юханшывĕ урлă каçнă чухнехи тата ЧЕРНИГОВ хулине ирĕке кăларнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Пирĕн ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пуçĕсене хунă Геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 20-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче ЗАПОРОЖЬЕ тата МЕЛИТОПОЛЬ хулисем енĕсенче пирĕн çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, 10 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра БОЛЬШОЙ ТОКМАК хулине, Запорожье облаçĕнчи НОВО-ВАСИЛЬЕВКА тата ПРИАЗОВСКОЕ ятлă район центрĕсене, КАМЫШУВАХА, ЮЛЬЕВКА, ЩЕРБАКОВКА, КОПАНИ, СЛАДКАЯ БАЛКА, РОСКОШНЫЙ, БОТЬЕВО, НОВО-ИВАНОВКА (Мелитополь хулинчен 13 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), ГАМОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 18 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Харьков облаçĕнчи ЗАЧЕПИЛОВКА ятлă район центрне тата АЛЕКСАНДРОВКА, КРАСНЫЙ ОКТЯБРЬ, КОЧЕРЕЖКИ, БУЛАТОВКА, МЕЖЕРИЧИ, КАРАБИНОВКА, ЛИМАНСКОЕ, ВОДЯНА, РАЗДОРЫ, СЛАВГОРОД ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ПОЛТАВА хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Полтава облаçĕнчи ЧУТОВО тата КАРЛОВКА ятлă район центрĕсене, СКОРОХОДОВО, КОЧУБЕЕВКА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 15 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçса, ГРЕБЕНКА хулипе пысăк чугун çул узелне, КОЗЕЛЕЦ хулине, Чернигов облаçĕнчи ЯБЛУНОВКА ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ТОПОЛИ, МОСТИЩЕ, МАРКОВЦЫ, ЯРОСЛАВКА, ЩАСТНОВКА, ВОРОНЬКИ, МАКЕЕВКА, ПОГРЕБЫ, ЛОЗОВОЙ ЯР, МАЛЮТИНЦЫ, КУЛАЖЕНЦЫ, ЯБЛОНЕВО, ИСКОВЦЫ, БЕРЕЗНЯКИ ятлă пысăк пунктсене тата МАРЬЯНОВКА, БАЯРСКИЙ, ВИЛЫ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 90 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Черниговообласĕнчи КОРЮКОВКА ятлă район центрне тата ЖАДОВ, ПОГОРЕЛЬЦЫ, ОХРАМЕЕВИЧИ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

БРЯНСК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 15 километртан 25 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 250 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Орел облаçĕнчи КЛЕТНЯ тата ЖИРЯТИНО ятлă район центрĕсене, Чернигов облаçĕнчи ГРЕМЯЧ ятлă район центрне тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК тата РОСЛАВЛЬ хулисем енĕсенче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 18 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 350 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ХОЛМ, ТОПОРОВО, ВЕЛЮЖИНА, КОРНИЛОВА, СЛОТОВО, ЛЯХОВО, СТРОГИНО, СЕРГЕЕВО, МИХАЙЛОВКА, ЛУГИ, ХОХЛОВКА, АСЕЛЬЕ, ХОРОШКОВО, ТЕРЕБЫНЬ, СЕЩА ятлă пысăк пунктсене тата СЕЩЕНСКАЯ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкса, ВЕЛИЖ хулине тытса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 38 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 47 самолетне персе ӳкернĕ.

* *

Днепропетровск хули енче пирĕн çарсем, нимĕçсем хушăри рубежсенче хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, ăнăçлăн малалла куçса пынă. Пĕр чаçăн боецĕсем, хăюллă маневрсем туса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пунктне аркатса тăкнă. Çав çапăçура 600 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, 10 тупă, 2 танк, 75 автомашина, штаб автобусне тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Пĕр чугун çул станцинче пирĕн çарсем хĕçпăшал тиесе лартнă 50 вагона, горючи, боеприпассем тата тĕштырă хунă складсене тытса илнĕ. Пирĕн танкистсем, хăвăрттăн атакăласа, Славгород чугун çул станцине йышăнса илнĕ, çапла вара Синельниково хулипе Запорожье хули хушшинчи чугун çула татса пăрахнă.

Пирĕн летчиксем тăшманăн пĕр пысăк аэродромне тапăннă. Бомбăсем пăрахса, тăшманăн çĕр çинче тăнă тăвата моторлă 8 самолетне тата икĕ моторлă 8 самолетне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 10 самолетĕнчен кая мар пысăк сиен кӳнĕ. Унсăр пуçне тата сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Полтава хули енче пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕсене пĕтерсе пырса, Орчик юханшывĕн хĕвелтухăç енчи хĕррине пырса тухнă. Советсен малта пыракан отрячĕсем юханшыв урлă каçнă та Полтава облаçĕнчи Карловка ятлă район центрне вăркăнса кĕрсе кайнă. Малти отрядсем хыççăн пырса çитнĕ пирĕн чаçсем тăшмана флангсенчен пырса çапнă та Карловкăран хĕссе кăларнă. Нимĕçсенчен 12 танк, хай тĕллĕн çӳрекен 5 тупă, 47 автомашина, боеприпассем тиенĕ 10 вагон, çар пурлăхĕн 5 складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Пĕр чаçри боецсем нимĕçсем Германи каторгине ирĕксĕр хăваласа каякан 16 пин мирлĕ совет гражданне ирĕке кăларнă.

* * *

Киев енче пирĕн Чернигов хулипе Киев хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх çапăçса пыракан çарсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, Козелец хули патне çитнĕ. Тăшман ку хула патне пысăк вăйсем илсе пынă, татти-сыпписĕр контратакăсем тунă. Икĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн совет çарĕсем нимĕçсене аркатса тăкнă та Козелец хулине йышăнса илнĕ. Нимĕçсен пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче темиçе танк, хай тĕллĕн çӳрекен тупăсем тата хир тупписем пур. Пирятин хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсен танковăй тата çăмăллăн куçса пыракан чаçĕсем, çав тери хăвăрттăн пырса çапса, тăшманăн пĕр соединенине çĕмĕрсе тăкнă. Çĕнтерĕве малалла вăйлатса пырса, пирĕн боецсем Гребенка хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ. Чугун çул çинче çар техникипе боеприпассем тиесе лартнă вагонсемпе платформăсем нумай тытса илнĕ. Трофейăсем хушшинче юсавлă темиçе танк, темиçе вунă автомашина, 500 ещĕк граната, 20.000 артиллери снарячĕ пур. Çĕр гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Новгород-Северский хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕннисем тапăнса пынă, тăшманăн чакакан чаçĕсене татти-сыпписĕр пыра-пыра çапнă. Малти отрядсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, Снов юханшыв рубежĕ патне пырса тухнă. Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен 1 200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 5 танк, 8 тупă, 50 автомашина, 300 лаша, тиевлĕ 130 лав, понтон паркĕ, 3 артиллери склачĕ, 150 километр электричество провочĕ тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. 500 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Каç пулнă тĕле пирĕн чаçсем çапăçса Снов юханшывĕ урлă каçса кайнă та, нимĕçсен контратакисене сире-сире ярса, татах малалла куçнă.

* * *

Брянск хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман, хăйĕн вăйлă отрячĕсен хӳттипе усă курса, хăйĕн тĕп вăйĕсене пирĕн çарсем пыра-пыра çапасран аяккалла илсе кайма хăтланнă. Çапла вăл Клетня районĕнчи хушăри оборона рубежĕнче чарăнса тăма вăхăт тупасшăн пулнă. Пирĕн çарсем çав тери хăвăрттăн пырса çапса, нимĕçсен шухăшне пĕтерсе лартнă. Пĕр соединени чаçĕсем çĕр каçа 25 километр малалла кайнă та Орел облаçĕнчи Клетня ятлă район центрне çавăрса илнĕ. Унтан ăна штурмласа йышăнса илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем кӳнĕ. Аркатса тăкнă пирки сапаланса кайнă нимĕçсен подразделенийĕсене пирĕн çарсем пайăн-пайăн пĕтерсе пыраççĕ.

* * *

Смоленск тата Рославль хулисем енĕсенче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, тăшман оборонин чылай узелĕсене тытса илнĕ. Вăл шутра Холм ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта илнĕ. Çак районра нимĕçсен пĕр пысăк отрячĕ, автомашинăсем çине ларса мăн çул çине тухса, çав ункăран тухма шутланă. Пирĕн боецсем, тăшмана хыçранах хăваласа пырса, гитлеровецсен çав отрядне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕç захватчикĕсенчен халăх пурăнакан 350 пункта ытла ирĕке кăларнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3000 çынтан кая мар пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Трофейăсем тытса илнĕ.

Смоленск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем 3 кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне татнă та штурмласа Велиж хулине тытса илнĕ.

* * *

Хура тинĕс флочĕн летчикĕсем Таманĕн кăнтăр çыранĕ сывăхĕнче нимĕç войскисене турттарса пыракан хай тĕллĕн çӳрекен десант баржисене курнă. Пирĕн авиаци тăшмана атакăланă та нимĕçсен тральщикне тата 3 десант баржине шыва путарнă. 4-мĕш баржи çинче пушар тухнă. Пирĕн летчиксем çав пушарта вăйлă взрыв пулнине курнă. Çав баржа вара шыва путнă.

* * *

Литва республикинче кĕрешекен партизансен отрячĕсем юлашки эрне хушшинче нимĕçсен 6 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 60 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çулсем çинчи засадăсенчен партизансем нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне персе вĕлернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсем валли выльăхсем сутăн илсе ăсатас ĕçе организацилесси çинчен

СССР Совнаркомĕ «Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене сыснасемпе сурăхсем тата качакасем кӳрсе парасси çинчен» 1943 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла тума йышăннă:

Курск, Орел тата Смоленск облаçĕсенчи нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене ăсатма колхозсемпе колхозниксенчен выльăхсем сутăн илмелли плана районсем тăрăх тивĕçлĕ сроксем палăртса çирĕплетнĕ.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсен сыснасемпе сурăхсем сутмалли заданисене халех колхозсем патне çитермелле, çавăн пекех тата ăнлантарулла ĕçе сарса ярса, колхозниксем выльăх-чĕрлĕх сутассине организацилемелле. Çак ĕçе ăна заданисене кăтартнă сроксенче пурнăçа кĕртес шутпа туса ирттермелле.

Колхозсемпе колхозниксем сутакан выльăхсем ирĕке кăларнă районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатнă çĕре кайнине шута илсе, колхозсемпе колхозниксене çакăн çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла: сутма уйăрнă выльăхсем ĕрчетме юрăхлă пулмалла, вĕсем çурални 4 уйăхран кая пулмалла мар, вĕсем ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен мăнтăр та сывă пулма тивĕçлĕ. Ирĕке тухнă районсене ăсатакан выльăхсен йышĕнче аçа выльăхсем 7 процентран ытла мар пулмалла. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсен сутăн илекен выльăхсене суйласа илме ветеринарипе зоотехника работникĕсене районсемпе колхозсене ямалла. «Заготскот» Чăваш конторин тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сутăн илнĕ выльăх-чĕрлĕхе ветеринари тĕлĕшпе пăхса тухса йышăнассине йĕркелемелле.

Райисполкомсене, «Заготскот» заявкисем тăрăх, выльăхсене хăваласа каякан çынсемпе кĕтӳçĕсем кирлĕ таран уйăрса пама. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне — выльăхсене çул çинче пăхса пыма зоотехникăпа ветеринари работникĕсем уйăрса пама хушнă.

«Заготскот» конторин выльăхсене ăсатма мĕн чухлĕ вагонсем кирлине çинчен халех заявка памалла, выльăхсене çул çинче пăхса пыма кирлĕ инвентаре хатĕрлесе хумалла, маршрутсен коменданчĕсене тата старши проводниксене уйăрса çирĕплетмелле.

Наркомзаг уполномоченнăйне Герасимов юлташа «Заготскот» конторин аллине концентрациллĕ апат-çимĕçсене «Заготзерно» минхисемпе уйăрса пама тата преслăнă утта станцисем патне кӳрсе хатĕрлесе хума хушнă. Çавăн пекех уполнаркомзагăн выльăхсем сутăн илес ĕçе организациленĕ çĕре хăй системинчи агентсене явăçтармалла тата заданисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Колхозсемпе колхозниксене çакăн çинчен ăнлантарса памалла: СССР Совнаркомĕн постановленийĕ тăрăх, ирĕке кăларнă районсене ăсатма пĕрер пăру е икшер путек сутнă колхозниксене 1943 çулта аш-какай парассинчен хăтараççĕ, пĕр путек сутнă пулсан, государствăна аш-какай памалли виçе 50 процент чухлĕ чакать. Выльăхсене колхозсемпе колхозниксенчен, рабочисемпе служащисенчен хăйсен ирĕкĕпе килĕшнĕ тăрăх государство хакĕпе сутăн илеççĕ, колхозсем сутнă выльăхсене государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне пурнăçланă шута кĕртеççĕ.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене ирĕке кăларнă районсем валли сутнă выльăхсем вырăнне сыснасемпе сурăхсем çĕнĕрен илсе фермăсене комплектлассине организацилеме хушнă.

Ирĕке кăларнă районсем валли выльăхсем сутăн илес, вĕсене турттарса е хăваласа каяс ĕçе ертсе пырассине тата выльăх-чĕрлĕхсене çул çинче лайăх сыхласа пырас ĕçĕн ответлăхне Чăваш АССР çĕрĕç халăх комиссарĕ Малов, уполнаркомзаг Герасимов, «Заготскот» конторин управляющийĕ Андрианов юлташсем çине хунă.

Выльăхсем сутăн илсе ăсатас ĕç мĕнле пыни çинчен райисполкомсемпе «Заготскот» конторисене Чăваш АССР Совнаркомне куллен телеграф тăрăх отчет парса тăмалла тунă.

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче государствăна тырă массăллăн леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ пулса иртет

Комсомолăн районсенчи чылай организацийĕсем сĕннипе, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ çитес вырсарникун — сентябрĕн 26-мĕшĕнче — государствăна тырă массăллăн леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникне ирттерме йышăннă.

ВЛКСМ райкомĕсене воскреснике тимлĕн хатĕрленсе кĕтсе илмешкĕн транспорт, туртăм вăйне тата ĕç вăйĕсене малтанах хатĕрлесе хума, колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи комсомолецсемпе çамрăксен мĕнпур вăйне кунĕн-çĕрĕн авăн çапнă çĕре мобилизацилеме, çапла вара государствăна ярса пама тырă çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хума хушнă.

Çак мероприятие ырласа, ВКП(б) Обкомĕ мĕнпур ВКП(б) райкомĕсене воскреснике хатĕрленсе ирттерес ĕçре комсомол организацийĕсене пулăшма хушнă.

Государствăна — пахча-çимĕç

КАЛИНИНЮ. «Новая жизнь» колхоз 17 гектар çинче тухăçлă пахча-çимĕç туса илчĕ. Государствăна пахча-çимĕç памалли плана тултарса, суту-илӳ организацийĕсене 28 центнер сутрĕ. Колхозниксене йӳнĕ хакпа 60 центнер сутрĕ. Хĕл валли 3 катка помидор, 3 катка хăяр тăварласа хучĕ.

С. ШАДИН.

Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсене Суворов тата Кутузов орденĕсемпе наградăлани

Çапăçу ĕçĕсене пĕлсе, хастаррăн ертсе пынăшăн тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç çапăçса пысăк ăнăçусем тунăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн сентябрĕн 17-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

1-мĕш степенлĕ Кутузов орденĕпе:

Артиллери генерал-майорне И. В. Бельцова,
Генерал-лейтенанта С. С. Бирюзова,
Генерал-лейтенанта Я. Т. Крейзера,
Генерал-лейтенанта Д. Д. Лелюшенкăна,
Арми генералне Р. Я. Малиновскис,
Генерал-полковника Ф. И. Толбухина,
Генерал-майора Г. И. Хетагурова,
Артиллери генерал-лейтенантне М. Н. Чистякова,
Генерал-лейтенанта В. Д. Цветаева.

2-мĕш степенлĕ Суворов орденĕпе 24 генералпа офицера наградăланă.

2-мĕш степенлĕ Кутузов орденĕпе 41 генералпа офицера наградăланă.

(ТАСС).

Республика уйхирĕсенче

Государствăна тырă парса татнă

ШАХАСАН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Тăрăнти «Красный партизан» колхоз сентябрĕн 19-мĕшĕнче пур тĕрлĕ культурăсене те çапса пĕтерчĕ. Вăл государствăна тырпул, пахча-çимĕç, сĕт-çу, аш-какай, çăм парса татнă. Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ, çĕрулми кăларас ĕçе вĕçленĕ. Халĕ колхоз кантăрсене шыва хурать.

Колхоз лайăх ĕçлесси ĕçе тĕрĕс тата пĕлсе организацилененчен килет. Колхоз председателĕ коммунист Васильев юлташ уборка ĕçĕсене лайăх организацилесе пычĕ. Вăл колхозниксене кулленхи ĕçре хавхалантарать. Нумай колхозниксем кăçал тухăçлăн ĕçлерĕç. Çапла 72 çулхи И. Федоров юлташ ку таранччен 319 ĕçкунĕ тунă. Çавăн пекех М. Филиппова, Ефимова тата ытти чылай колхозниксем те 300—350-шар ĕçкунĕ тунă. Колхозра ĕçкунĕ тумалли минимума пурнăçа кĕртмен колхозниксем пачах та çук.

В. ВЕСЕЛОВ.

Планран ирттерсе

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Тăван Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, районри колхозсем государствăна планран ирттерсе тырă, аш-какай, сĕт-çу параççĕ.

Хирлеппоçĕнчи «Красный Октябрь» колхозăн планпа кăçал государствăна 3176 килограмм аш памалла, вăл ăна тахçанах парса татнă тата планран ирттерсе 3062 килограмм пачĕ. Кунсăр пуçне тата вăл планран ирттерсе 377 литр сĕт панă.

Кĕçĕн Шĕвĕшри Каганович ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те пурнăçланă. Колхоз членĕсем сĕннĕ тăрăх, çак колхоз государствăна планран ирттерсе 918 килограмм аш-какай, 46 литр сĕт, 188 çăмарта, 2,62 килограмм çăм пачĕ.

Качалаври «Труд», Йăлкăшри «Çĕнĕ вăй», Синерти Жданов ячĕпе тăракан, Витеçутĕнчи «Шуçăм» колхозсем те государство умĕнчи пур обязательствăсене те пурнăçланă хыççăн планран ирттерсе темиçешер центнер аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем панă.

Государствăна тырă часрах парса татмалла

ЙĔПРЕÇ. Государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне районри „Красный Октябрь" тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем кăна тултарнă. Район хăйĕн планне 36 процент çеç тултарнă. Государствăна тырă памалли пилĕккунлăхри графика пĕр колхоз та йĕркеллĕ пурнăçласа паман. Çапла вара, сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне район хатĕрлев пункчĕсене 700 тонна тырра сахалтарах леçнĕ. Уйрăмах «Красный фронтовик», „Çĕнĕ Чураш" тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем япăх ĕçлеççĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз хатĕрлев пунктĕнчен 4—5 çухрăмра кăна пулин те, талăкра пĕр турта çеç леçет. Çавнашкал вара государствăна тырă памалли плана 50 процент çеç тултарнă. Чылай колхозсем, хăйсен çапнă тырă пур пулин те, государствăна тырă памасăр тăраççĕ. Чылай колхозсенче авăн çапас ĕç вăраххăн пырать. МТС молотилкисемпе пур çĕрте те кирлĕ пек усă курмаççĕ. Хурамалти „Красный воин" колхозра, сăмахран, МТС молотилки 34 кун хушши ĕçлемесĕр ларнă. Çак вăхăтра колхоз авăна тăпачăпе çапас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. «Строитель» колхоз (председателĕ Захаров) колхозниксене аванс памалли йĕркене пăснă.

Çак ыйтăва Йĕпрес райсоветĕн черетлĕ сессийĕ сӳтсе-яврĕ. Сесси государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатмалли мерăсем палăртса хăварчĕ.

П. КУРАКОВ.

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ СЕНТЯБРĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Вăрнар	1
Етĕрне	2
Сĕнтĕрвăрри	3
Советски	4
Шупашкар	5
Канаш	6
Калинино	7
Вăрмар	8
Çĕрпӳ	9
Октябрьски	10
Сĕнтĕр	11
Куславкка	12
Красноармейски	13
Шăхасан	14
Элĕк	15
Йĕпреç	16
Ишлей	17
Улатăр	18
Çĕмĕрле	19
Комсомольски	20
Хĕрлĕ Чутай	21
Тăвай	22
Первомайски	23
Елчĕк	24
Кувакино	25
Чкаловски	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

Ăмăртура малти вырăна тухнă Вăрнар районĕ сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли çулталăкри плана 84,9 процент тултарнă.

1944 çулшăн 100 центнер

КАНАШ. Государствăна тырă памалли плана район сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 72 процент тултарчĕ. «3-мĕш пятилетка», «Хĕрлĕ хĕвел», «Мотор» колхозсем 1943 çулхи тата 1944 çулшăн натуроплата шучĕпе 100 центнер тырă пачĕç.

А. ДОБРОДУШЕВ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çĕрулми кăларасçĕ

Ямакассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз (Канаш р.) ялхуçалăх ĕçне вăхăтра вĕçлеме тăрăшать. Колхоз сентябрĕн 10-мĕшĕнче колхозниксем çĕрулми кăларма тытăнчĕç. Çĕрулмине кун сухапуçпе 7 гектар çĕрулми кăларчĕç. Ку ĕçре 5-мĕш бригада колхозникĕсем аван ĕçлеççĕ.

И. МАКСИМОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене— ăшă тумтирсем

ШАХАСАН. Анат-Юнтапари Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем тунипе савăнса, боецсем валли 16 мăшăр носки, 10 мăшăр алшиш, 25 килограмм çăм тата 22 тир пухса пачĕç. Колхоз председателĕ, Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ П. Афанасьев 5 тир, пĕр мăшăр алшиш тата тепĕр мăшăр носки пачĕ. Çавăн пекех колхоз активĕнчен кашни 3-шер тир, 0,5-шер килограмм çăм тата пĕрер мăшăр алшиш-чăлхасем пачĕç. Ăшă япаласем пухас ĕç ăнăçлăн пырать.

М. НИКОЛАЕВ.

* * *

КАЛИНИНО, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем валли ăшă япаласем хатĕрлеме тытăнчĕç. Пурĕ 190 килограмм çăм, 130 тир пухрĕç. Кунсăр пуçне 200 мăшăр алшиш, 170 мăшăр çăм носки, 25 алшăлли, 35 метр пир пухнă. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 21 тир, 10 килограмм çăм, 5 мăшăр алшиш, «Красноармеец» колхоз членĕсем 12 тир, 7 мăшăр алшиш, 7 мăшăр носки пачĕç.

Н. НИКИТИН.

ЛĔПСЕРСЕН ПРИМЕРĔПЕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Çĕрпӳ районĕнчи Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозсен членĕсем çар çыннисен çемьисем валли тата тăван çĕршыва хӳтĕлесе çапăçура пуçĕсене хунă çынсен шкулсенче вĕренекен ачисем валли ăшă япаласем пухас ĕçе пуçарчĕç. Çак пуçарăва районри колхозниксемпе колхозницăсем ăшă кăмăлпа йышăнчĕç. Кармаминчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра фронтовик çемьисен ачисем валли 4 гимнастерка, 5 çĕлĕк, 6 килограмм çăм, 33 тир, 10 мăшăр алшиш тата ытти япаласем пухнă. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне районра 202 килограмм çăм, 40 çĕлĕк, 42 мăшăр носки, 33 мăшăр алшиш, 20 метр пир-авăр, 5 пĕк-пĕм тата çимелли продуктсем чылай пухнă.

Ф. Малышкин.

Фронтовиксен çемьисене пулăшаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. «Большевик» завод дирекцийĕпе завком фронтовиксен çемьисене куллен пулăшаççĕ. Фронтовиксен çемьисем валли пурăнмалли 7 хваттере юсанă, 3 çемьене лайăхрах хваттерсене куçарнă тата 7 çемьене çĕнĕ хваттерсем панă.

Фронтовиксен 52 ачине лагерьсене детплощадкăсене янă. Кунта 1090 тенкĕ расходланă. Кунсăр пуçне 5000 тенкĕ укçа панă. Çуркунне пахча-çимĕçсем лартнă вăхăтра чылай çемьене вăрлăхсем парса пулăшнă.

(Хамăр информ.).

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

Пăрачкав районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисем начар ĕçлени çинчен

Алтай крайĕнчи тата Чкалов облаçĕнчи комсомол организацийĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçлассишĕн комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисен социализмлă ăмăртăвне пуçарчĕç. Республикăри чылай комсомол организацийĕсем, алтаецсемпе чкаловецсен пуçарăвне çийĕнчех йышăнса илсе, ку ĕçре паха çитĕнӳсем турĕç.

Анчах Пăрачкав районĕнчи комсомол организацийĕсем ку пуçарăва тивĕçлипе йышăнса илмен, комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек организацилемен. Комсомолăн «Большевик», «Факел», «Ударник» тата ытти хăшпĕр колхозсенчи организацийĕсем авăна кунĕн-çĕрĕн çапассине йĕркелемен, тырра вăхăтра сăвăрмаççĕ, çавна пула государствăна тырă леçес ĕçе вăраха ярса пыраççĕ. Комсомол организацийĕсем ку ĕçсенче вăкăрсемпе, хĕсĕр тата сĕт сахал паракан ĕнесемпе усă курмаççĕ. ВЛКСМ райкомĕ транспорт бригадисен ĕçне лайăхрах организацилес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче Пăрачкав районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисем начар ĕçлени çинчен сӳтсе-яврĕ. Бюро ВЛКСМ Пăрачкав райкомне комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва тĕрĕс организацилеме тата ăна пуçарса ертсе пыма хушрĕ.

ВЛКСМ райкомне тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене çапла тума хушнă: ăмăртăва кашни транспорт бригадине, тырă турттарас ĕçре ĕçлекен кашни çамрăка хутшăнтармалла; транспорт бригадисенче виçĕ комсомолецран кая мар пулсан, унта комсомол группи тумалла; бригадăра 3 комсомолецран каярах пулсан, унта комсомол организаторне анчах çирĕплетмелле.

Социализмлă ăмăрту мĕнле сарăлса пынине, ăмăрту опытне, бригадăсем графика пурнăçласа пынине анлăн çутатса тăмалла, çапла вара государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртмелле.

Кашкăрсене пĕтермелли мерăсем

Юлашки вăхăтра Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Первомайски тата ытти районсенче те кашкăрсем выльăх-чĕрлĕхсене тапăнни йышлана пуçларĕ. Çавна пула ЧАССР Совнаркомĕ республикăра кашкăрсемпе кĕрешекен комисси тунă. Çав комиссие ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Федоров юлташ, республикăри Заготживсырье конторин управляющийĕ Френкель юлташ тата ыттисем те кĕреççĕ. Комиссие 6 çынтан бригада тума тата çав ĕçе вырăнти сунарçăсене хутшăнтарма хушнă.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Заготживсырье конторине, сунарçăсен инспекцине тата колхоз председателĕсене кашкăрсене пĕтерес ĕçре кирлĕ пулакан япаласене çителĕклĕ тăран хатĕрлесе хума хушнă

Çĕнтерӳ ячĕпе

ЭЛĔК. МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине ĕç нормине икĕ-виçĕ хут ытларах тултарнипе ответлеççĕ. Машиновед Захаров юлташ МК—1100 маркăллă молотилкăпа 12 гектар вырăнне 22—24 гектар тырă çапать. А. Федоров юлташ планран ирттерсе 5—6 тонна ытларах çапать. Паянхи куна вăл 200 тонна тырă çапнă. МТС-ăн планпа 755 гектар тырă çапмалла пулнă, вăл сентябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 764 гектар тырă çапнă. Трактористсемпе комбайнерсем çак кунсенче тата тухăçлăрах ĕçлеме пулса хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Х. ЛИСИН.

Ишлей районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ

Фронтпа тăван çĕршыв валли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн кĕрешсе, пирĕн районри колхозсем сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлăн пурнăçларĕç. Плана лашасем ĕрчетес енĕпе те ирттерсе тултарнă. Халĕ колхозсен фермисенче планпа пăхнинчен ĕне-выльăхсем 679 пуç, сыснасем 1791 пуç, сурăхсемпе качакасем 1 408 пуç, кроликсем 125 пуç ытларах.

Районри 113 колхозран 23-шĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулти плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе пурнăçланă.

Пирĕн районри колхозсем общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пуян опыт пухрĕç. Çав опытпа туллин усă курса ĕçлесе, фермăсенче ĕçлекен колхозницăсем, зоотехникăпа ветеринари работникĕсем кăçал каллех тепĕр чаплă çĕнтерӳ турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре уйрăмах Тивĕш ялсоветĕнчи «Звезда», Шетмĕпуç ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Вăрман Сĕктерти «Парижская Коммуна» колхозсем мухтава тивĕçлĕн ĕçлерĕç. Тивĕш ялсоветĕнчи «Звезда» колхоз (председателĕ Я. Николаев юлташ) плана пур выльăхсем енĕпе те чылай ирттерсе пурнăçланă. Планпа сурăхсем 110 пуç пулмалла пулсан, халĕ 207 пуç пур, çавăн пекех планпа пăхнинчен сыснасем 69 пуç, ĕне выльăхсем 9 пуç ытларах.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнӳсемшĕн чылай колхозницăсем ĕçшĕн хушса илеççĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхозри доярка Яковлева юлташ 143 литр сĕт, «Хăймала» колхозри доярка Кудряшова юлташ — 166 литр, «Ырашпулăх» колхозри дояркăсем Васильева 165 литр, Максимова—135 литр сĕт илеççĕ. Çавăн пекех Тăрăнри Калинин ячĕпе тăракан колхозри доярка Николаева юлташ та преми шучĕпе 190 литр сĕт илет.

«11 лет Чувашии» колхозра пăру пăхакан Смирнова колхозница кăçал 7 пăру илсе пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтернĕ. Ăна та ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ. Зоотехниксем лайăх ĕçленине те палăртмалла. Тивĕш участокĕнчи Иванова зоотехник хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Унăн участокĕнчи 23 колхозран 22-шĕ 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Çавăн пекех зоотехник Хоменко юлташ та тăрăшса ĕçлет.

Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тунă çитĕнӳ эпир ку ĕçри мĕнпур майсемпе усă курнине пĕлтерместха. Район, пĕтĕмĕшпе илсен, государство планне пурнăçа кĕртнĕ пулсан та, пирĕн 4 колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕр йышши выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те пурнăçламан, 8 колхоз—икĕ йышши выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе плана пурнăçа кĕртмен. Эпир ку çитменлĕхе çитес вăхăтрах пĕтерме тăрăшатпăр.

Халĕ хĕрсех выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленетпĕр. Кăçал пирĕн колхозсем çĕнĕрен витесем тăва-тăва лартрĕç. Çапла кăçал 65 лаша, 265 ĕне, 135 пăру, 380 сурăх, 1180 чăх, 240 сысна вырнаçмалăх витесем çĕнĕрен туса лартнă. Апла пулин те, выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ чылай ӳснĕ май, витесем çителĕксĕрха пирĕн.

Кăçал эпир выльăх апачĕ хатĕрлесси çине тимлĕн çаврăнса пăхрăмăр. Улăх утисене тата утăлăх акнă курăксене типтерлĕн пухса кĕртрĕмĕр. Силос хывмалли плана августăн 30-мĕшĕ тĕлнех ирттерсе пурнăçланă. Çулçă 1 280 лав хатĕрленĕ.

Районри колхозсем государствăна аш-какай памалли плана сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 103 процент пурнăçларĕç. Малта пыракан колхозсем— «Авангард» 1944 çулшăн аванс шучĕпе 900 литр сĕт, «Звезда» колхоз 10 центнер, Киров ячĕпе тăракан колхоз 11 центнер какай пачĕç. Çавăн пекех «Парижская Коммуна», «Большевик», «Красный танк» колхозсем те çитес çулшăн аванс шучĕпе выльăх-чĕрлĕхĕн чылай продукчĕсене парса хучĕç.

1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана срокчен пурнăçа кĕртни—эпир Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва пулăшни пулать. Эпир ку пулăшăва малашне те кулленех ӳстерсе пырăпăр.

П. СИДОРОВ, ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Рузвельтăн конгреса янă посланийĕ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС.) Рузвельт çуллахи каникулсенчен таврăннă хыççăн пухăннă конгреса послани янă.

Посланире каникулта пулнă вăхăтра Европăпа Азири фронтсенче пулса иртнĕ вăрçă ĕçĕсем çинчен пĕтĕмлетсе каланă. Çав посланире Рузвельт Италири лару-тăру çинчен чарăнса тăрса, союзниксен Неапольрен кăнтăр еннерехри çарсен йывăр çапăçăвĕсем çинчен каланă. Халь Италие антарнă çарсене,—тенĕ посланире,—унта антарма Касабланкăра палăртнăччĕ. Квебекра Германипе Японие халиччен хинчен те вăйлăрах пырса çапмалли тĕплĕ план тунă, çавăнпа пĕрлех Европăра тата ытти вырăнсенче те çарсене хăçан тата мĕнле пунктсене антармаллине кăтартса хунă.

Сицилири тата Вăтаçĕр тинĕсри вăрçă ĕçĕсем çинчен, союзниксем Италие çарсем антарни çинчен, Муссолини вырăнтан тухни çинчен каласа, Рузвельт малалла çапла каланă: ку вăл тĕнĕл держависен руководстви малтанхи хут арканни пулса тăрать, кун хыççăн вăл татах та арканса пырĕ, тенĕ. Гитларпа нацистсем хăйсен вырăнĕнчен сирпĕнни хыççăн вĕсемпе пĕрле Пруссири пĕр каварлă милитаристсем те сирпĕнме тивĕç — тенĕ Рузвельт.

Малалла президент союзниксен сывлăшри çапăçăвĕсем çинчен чарăнса тăнă. Çав çапăçусен тĕллевĕ хĕвелтухăç тата кăнтăр Германие пырса çапмалли базăсем туса хурса, ним юлмиччен пĕтерсе тăкакан вăрçа çав районсене куçарасси пулса тăрать, çав вырăнсем çине кунĕн-çĕрĕн бомбăсем пăрахмалла, тенĕ Рузвельт.

«Нацистла агрессорсене вырăссен çарĕсем аркатмаллах пыра-пыра çапнипе кашни американец савăнать! Кăçалхи çулла нимĕçсем вырăссем çине 1941 тата 1942 çулсенчи пек ăнăçлăн тапăнса пыраймарĕç. Хальхинче вырăссем нимĕçсене çав тери пысăк поражени тӳстерчĕç, ун пек пысăк поражени Наполеон 1812 çулта чакнăранпа та пулман».

Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем пĕтĕм тĕнчене савăнтараççĕ, тесе паллă тунă послани. «Вырăссен кампанийĕ, Германи салтакĕсене вырăс çĕрĕнчен хăваласа кăларса, Германи çĕрĕ çине пырса кĕресси патне илсе пырать».

США-ра вăрçă хатĕрĕсем тăвасси вăйланни çине куçса, президент августпа сентябрь уйăхĕсенче çĕнĕ çитĕнӳсем тунине палăртнă. Çак юлашки икĕ уйăх хушшинче США-ри предприятисем 15 пин самолета яхăн, верфьсем 281 судно туса кăларнă, ку вăл кашни кун пилĕк суднăна яхăн туса кăларни пулать.

США-н шалти политикин задачисемпе унăн уйрăмлăхĕсене кăтартса панă хыççăн Рузвельт юлашкинчен çапла каланă: «Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, ытти çĕршывсемпе туслă çыхăну тытса, «тĕнчери агрессие пĕтерсе тăкассишĕн», ун хыççăн пĕр-пĕрин хушшинче лайăх та çирĕп çыхăну туса хурассишĕн кĕрешеççĕ, тенĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин специаль корреспонденчĕ союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕнчен: американсен 5-мĕш çарĕн частĕсем Салерноран кăнтăр еннерехри районра нимĕçсене малалла хĕссе пыраççĕ, тесе пĕлтерет. Çапăçусем Калоре юханшывĕнчен хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче пыраççĕ.

Корреспондент каланă тăрăх, Неаполь çывăхĕнчи Искиа утравне йышăнса илнĕ союзниксен çарĕсем Неаполитански заливĕ лайăх позицисем йышăннă.

Нимĕç çарĕсене Сардини утравĕ çинчен кусарни

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сардини утравĕ çинчен немĕцсене Италин дивизийĕ хăваласа кăларнă хыççăн нимĕç çарĕсем çав утрав çинчен тухса кайнă.

Сардини утравĕ çинчен куçакан çарсем Корсика утравĕ çинелле каяççĕ.

Англи çарĕсем Самос тата Кастелоризо утравĕсене йышăнса илнĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стамбулран пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 18-мĕшĕнче Самос утравĕ çине (Эгейски тинĕс) Англин çарĕсем пырса çитнĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стамбулран пĕлтернĕ тăрăхах, Додеканез утравĕсен ушкăнĕнчи Кастелоризо утравне англичансем тытса илнĕ.

Итали офицерĕсем тарни

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви: Çурçĕр Африкăри тата Сицилири аэродромсем çине Итали летчикĕсем вĕçсе пыраççĕ, тесе пĕлтерет. Агентствăн тепĕр пĕлтерĕвĕнче Италин çĕршер офицерĕсемпе салтакĕсем Эгейски тинĕсри Додеканез утравĕсемпе Греци утравĕсем çинчен Турци çыранĕсем патне тарса пыни çинчен каланă.

Румынири закона хирĕçле ĕçсем

СТАМБУЛ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири пичет халăхăн анлă сийĕ, пурнăç питĕ юхăнса çитнине пула, закона хирĕçле ĕçсем тăвасси ӳссе кайни çинчен çырса кăларнă. «Акциуня» ятлă хаçат: «Бухарест тата ун çывăхĕнчи хуласенче вăрăсем питĕ нумайланса кайрĕç, çакă талкишĕпех пулса пыракан çаратăва нимле майпа та пĕтерме май çук», тесе çырать.

«Вяца» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестра проституцине пурăнакан çынсен йышĕ калама çук ӳссе кайнă: «Хулан питĕ нумай урамĕсенче, —тесе çырать хаçат,—проституткăсем нумайланса çитнипе иртсе çӳреме те май çук». «Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бухарест урамĕсенче пурнăç йывăррипех амăшĕсем пухса пăрахнă ачасем час-часах тупăнаççĕ.

Черчилль Англие таврăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер пĕлтернĕ тăрăх, Лондона премьер-министр Черчилль Англие таврăнни çинчен ятарласа пĕлтернĕ.

Италири гитлерла командованин приказĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви, Берни корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германин Италире тăракан çарĕ командованийĕ панă приказ тăрăх, Италин мĕнпур салтакĕсен [illegible] тумтирпе нимĕçсен пунктсене пухăнмалла.

Редакцие килнĕ çыру

Пулăшу памалла

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Вăрçă пуçланнăранпах Е. Моисеевпа унăн икĕ ывăлĕ тăван çĕршыва хӳтĕлеççĕ. Е. Моисеевăн арăмĕ ялта 6 пĕчĕк ачине пăхса ӳстерет. „Пионер" колхоз (председателĕ Н. Петров) Моисеева Александрăн пурнăçĕ йывăррине лайăх пĕлсе тăрать, анчах ăна нимĕнле пулăшу та памасть.

Çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе иртернĕ вунăкунлăхра колхоз правленийĕ Моиссевăна сысна çури парса пулăшмалла тесе йышăнса хăварнă. Унтанпа çур-çул иртрĕ, анчах колхоз правленийĕ хăйĕн решенине пурнăçлама шутламасть-ха.

Колхозăн пулăшу пама пур условисем те пур. Моисеевăн шкула çӳрекен икĕ ачине: Аврампа Зинăна тумтирсем туса пама та, апатçимĕç енчен пулăшма та май пур.

Моисеевăна колхозра пулăшманни çинчен Первомайски райсовет председателĕн çар çыннисен çемьисене пулăшас енĕпе ĕçлекен заместителĕ Самарин юлташ аванах пĕлет. Анчах вăл:

— Колхоз хăй тыррипе хăй хуçа, эпĕ нимĕнех те тума пултараймастăп, — тесе лăпланса ларать.

Моисеевăна пулăшу памаллах. Унсăрăн унăн ачисем шкул тулашĕнче юлма пултараççĕ.

М. Сакмаров.

Пĕлтерӳ

Ыран, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) лекци пулать. Лекци теми çакăн пек:

«Совет Союзĕн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери ларутăрăвĕ».

Лекцие ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Якерсон юлташ** вулать.

Билетсене ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче илмелле.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПИЩЕПРОМНЕ апатçимĕç промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер-технолог тата бухгалтер-ревизор кирлĕ. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15. Наркомпищепром. Тел. 2—11. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1831 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № ... Ф. б. ... 88